Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви

Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ

Чăваш чĕлхипе литератури кафедри

**Технологи картти**

Урок теми: «**Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси**»

Тăван (чăваш) чĕлхе: 5  класс (чăваш чĕлхиллĕ шкул)

Хатĕрлекенĕ –

Морозова Надежда Ивановна, Куславкка районĕн Елчĕк

вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен

Куславкка – 2018

Урокăн технологи картти

1. Предмет: тăван (чăваш) чĕлхе

2. Класс: 5

3. Шкул: Куславкка районĕн Елчĕк вăтам шкулĕ

4. Тема (пай): «Фонетикăпа орфографи. Графикăпа орфографи. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ, текст. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем. Чĕлхе тата культура»

5. Урок теми: «Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси», 1-мĕш урок

6. Урок тĕсĕ: çĕнĕ пĕлӳ илмелли урок

7. Технологисем: блоклă-модульлĕ, информаципе хутшăну, сывлăха упрас, системăллă-ĕçлевлĕхлĕ.

8. Мелсемпе меслетсем: ыйту-хурав; учитель сăмахĕ; ачасем умне проблема кăларса тăратни, тема тăрăх калаçу ирттерни; пĕтĕмлетӳ**,** мăшăрпа ĕçлени, ушкăнпа ĕçлени; суйлавлă вулав, ача хаклавĕ, вĕрентекен хаклавĕ, юлташ хаклавĕ, пĕтĕмлетӳ, шырав, виçĕ енлĕ дневник, йĕркелӳ, синквейн.

| 9. Харкамăн пĕлӳ илмелли тĕллевсем: | 10. Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсен тĕллевĕсем: | 11. Предметăн ятарлă пĕлӳ илмелли тĕллевĕсем: |
|---|---|---|
| *право:<br>– çут çанталăкри илем савăнăç кӳнине ăнланни;<br>*тĕллевпе тупсăм: | *йĕркелӳ:<br>– ĕçĕн тĕллевне лартма пултарни;<br>– ĕç йĕркине, ăна пурнăçлама кирлĕ мелсемпе майсене тупма тăрăшни; | * вĕренекенсен пĕлӳ, пултару, хăнăху ĕçĕ-хĕлĕ:<br>– правилăна пĕрремĕш хут вуласа тĕп сăмахсене палăртма пултарни; |

| | | |
|---|---|---|
| – ача илеме курнӑ май ӑна сыхламаллине те  ӑнкарни;<br>*моральпе этика:<br>– ҫыннӑн хӑйшӗн ҫеҫ мар, тӑван тавралӑхшӑн та тӑрӑшма кирлине чухлама пӗлни. | – тунӑ ӗҫе пӗтӗмлетме пултарни;<br>*хутшӑну:<br>– хутшӑнура пӗр-пӗрне илтме хӑнӑхни;<br>– иккӗн тата ушкӑнра килӗштерсе ӗҫлеме хӑнӑхни;<br>– ҫынсем тӗрлӗрен шухӑшлама пултарнине ӑнланма тӑрӑшни, ытти ҫынсен шухӑшне хисеплеме пултарни;<br>– харпӑр хӑйӗн тата пӗрле вӗренекенсен йӑнӑшӗсене курма, ӑнлантарма, пӗр-пӗрне йӑнӑш тӑвасран асӑрхаттарма хӑнӑхни;<br>*информаци:<br>– кӗнекере кирлӗ темӑна, правилӑна хӑвӑрт тупма вӗренни;<br>– харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлес туртӑма аталантарни. | – правилӑпа усӑ курма пултарни;<br>– ыйтусене ятарласа хатӗрленмесӗр туллин хуравлани;<br>– чӗлхе терминӗсемпе ҫыру тата калаҫу пуплевӗнче усӑ курма хӑнӑхни;<br>* вӗрентӳ хевти-талпӑнӑвӗ:<br>– ҫын ячӗсене чӑвашла пӗлес туртӑма аталантарма талпӑнни. |

12. Чĕлхе теорийĕ: вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăсем

13. Словарь ĕçĕ: а) ăнлантармалли пай: *лăсă, киленнĕ*

ă) çырма вĕрентмелли пай: *лăссисем, ытлашши, силленсе, каллех, малалла, çăмăллăн, ытлашши, киленнĕ, ула такка, шăппăн-шăппăн, патнелле, тăрри, таккать, унталла-кунталла, аялалла, çӳлелле, хушшинче*.

14. Курăмлăх хатĕрĕсем: мультимедиа слайдсем, графикăллă хатĕрсем (каснă сас паллисем), символла хатĕрсем (ĕç хушнă карточкăсем тата тĕрĕслемелли карточкăсем, чăваш алфавитĕнчи хупă сас паллисен карточкисем)

15. Кăтарту хатĕрĕсем: компьютер, презентаци, мультимедиапроектор, слайдсем.

Урок юхăмĕ

| Урок тапхăрĕсем | Ĕçлевлĕхĕн тĕп енĕсем | Вĕрентекен ĕçĕ | Вĕренекенсен ĕçĕ-хĕлĕ | Мелпе меслетсем |
|---|---|---|---|---|
| **I. Кăсăклантарсаяни.** | 1. Сывлăх сунни. | Ачасене сывлăх сунни. | «Сывлăх сунатпăр!» тесе сывлăх сунаççĕ. | |
| | 2. Ĕçлеме хавхалантарни | Таблопа мĕнле ĕçлемеллине ăнлантарни<br>*– Паян урокра таблопа ĕçлĕпĕр. Эсир унта хĕрлĕ, сарă тата кăвак тĕслĕ тăваткалсемпе хăвăр мĕнле ĕçленине хакласа* | Таблона ĕçлеме хатĕрлесе хураççĕ. | Ăнлантару йĕркелӳ |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | *пырăр. Урок вĕçĕнче вăтам балл шутласа кăларатпăр та – вăл паянхи урокшăн оценка пулать.* | | |
| | 3. Проблемăллă ыйту лартни. | *– Йывăç çинче ула така ларма пултарать-и?* <br> *Эпĕ кăна хам шухăшласа тупман, акă пирĕн класри Петĕр сочиненире «Йывăç çинче ула така ларать» тесе çырса панă. Ула така йывăç çине мĕнле улăхса ларнă-ши?* <br> *– Паян урокра шăпах çакăн çинчен шухăшламалла пулать.* | Ачасем вĕрентекенпе калаçаççĕ. | Калаçу |
| | 1. Килти ĕçе тĕрĕслени. | *– Ачасем, эсир паянхи урока хатĕрленсе килте те ĕçленĕ. 2 хупă сас паллиллĕ сăмахсем мĕнлисем тупрăр?* | Ачасем типтер тăрăх хăйсем тупнă сăмахсене вуласа параççĕ, доска çине тухса çыраççĕ: <br> *ВВ: сăвва,* <br> *ЙЙ: вăййа (тух),* <br> *КК: иккĕ,саккăр,куккук, такка, кукка, кăркка* <br> *ЛЛ: çулла, хĕлле, малалла, каялла, аллă, шăллăм* <br> *ММ: темме, мемме,* | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | *НН: вуннӑ, анне, асанне, кӗркунне, ҫуркунне, Анна,*<br>*ПП: пиллӗк, аппа, шӑппӑн,*<br>*РР: пӗрре, юрра,*<br>*СС: ӑсса, тӑсса,* ***касса (****билет сутмалли),* ***класс***<br>*ҪҪ: виҫҫӗ,*<br>*ТТ: тӑваттӑ, улттӑ, асатте, тӗттӗм, паттӑр, маттур,*<br>*ХХ: тӑххӑр,*<br>*ЧЧ: ҫиччӗ, пичче,*<br>*ШШ: Мишша* | |
| **II. Ӑнланса илни.** | 1. Урок теми патне илсе пыни. | – *Тӑсса ҫырнӑ сас паллисене наукӑра мӗнле калаҫҫӗ-ши?* | Ачасем ыйтӑва хуравлаймаҫҫӗ, вара учитель сӗннипе вӗренӳ кӗнекинче хӑйсем вӗренсе ҫитнӗ темӑна шыраса тупаҫҫӗ, типтере урок темине ҫыраҫҫӗ. | Шырав<br><br>Тавҫӑру |
| | 2.Урок тӗллевӗсене палӑртни. | – *Паян урокра мӗн-мӗн тума вӗренмелле?* | Урок тӗллевӗсене палӑртаҫҫӗ: вӑрӑммӑн илтӗнекен хупӑ сас паллиллӗ сӑмахсене тупма пӗлмелле, вӗсене 2 пӗр пек сас паллипе ҫырма хӑнӑхмалла, вуланӑ чухне пайласа вулама вӗренмелле. | Ушкӑнпа ӗҫлени |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | 2. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сас паллисен сăмахри вы-рăнне палăрт-ни: а) чăваш сăмахĕсенче, ă) вырăс сăма-хĕсенче | *– Эсир кунта* ***касса, класс*** *сăмахсене те çыртăр-ха. Вĕсем хăш чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем пулаççĕ?Вырăс чĕлхинче вăрăммăн илтĕнекен хупă сас паллисем сăмахра ăçта-ăçта тăма пултараççĕ? Чăваш чĕлхинче ăçта тăмаççĕ?* | *Ачасем хăйсем сăнанине пĕтĕмлетеççĕ: вăрăммăн илтĕнекен хупă сас паллисене сăмах варринче çыраççĕ. Вырăс чĕлхинче вăрăммăн илтĕнекен хупă сас паллисем сăмах варринче тата сăмах вĕçĕнче тăраççĕ. Чăваш чĕлхинче вара сăмах вĕçĕнче тăмаççĕ.* | пĕтĕмлетӳ |
| | б) таблицăпа ĕçлеттерни: „класс” сăмах вĕçленĕвне кăтартать | *Тĕп п. класс*<br>*Кам. п.. класăн*<br>*Пару п. класа*<br>*В.п. класра*<br>*Туху п. класран*<br>*Пĕрл. п. класпа*<br>*Ç. п. классăр*<br>*Пирке п. класшăн* | *„Класс” сăмаха тĕп падежра 2 сс-па çыратпăр, ытти чухне 1с-па. Çуклăх падежĕнче –сăр аффикс хушăнать те 2 сс пулать.* | сăнав |
| | 2. Вĕренӳ кĕнекинчи (94 стр.) правило тăрăх синквейн | Правило: Чăваш сăмахĕсен варринче хупă сасăсем кĕскен те, вăрăммăн та илтĕнме пултараççĕ. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасса çырура икĕ пĕр пек сас паллипе палăртаççĕ: алă – аллă... Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасă сăмах пуçламăшĕпе вĕçĕнче | | вулав |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | çырни: | пулмасть. | | |
| | | *– Эсир правило тăрăх сăвă çырса курнă-и? Халĕ правило тăрăх сăвă çырăпăр.*<br>а) суйлавлă шырав irttерет; ачасем суйланă сăмахсене сасăпа вулаттарать, пĕр-икĕ ача ĕçне хаклать. | а) ачасем правилăра синквейн çырма кирлĕ сăмахсене текстомаркерпа паллă тăваççĕ: Чăваш сăмахĕсен варринче хупă сасăсем кĕскен те, вăрăммăн та илтĕнме пултараççĕ. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасса çырура икĕ пĕр пек сас паллипе палăртаççĕ: алă – аллă... | суйлавлă шырав<br><br>вĕрентекен хаклавĕ |
| | | ă) синквейн çыртарать | ă) ачасем синвкейн çыраççĕ (1 №-лĕ хушса пани.) | синквейн |
| | | б) сăвăланă правилăна темиçе ачана вулаттарать. | Ачасем учитель хакланине таблона лартаççĕ. | вĕрентекен хаклавĕ |
| | 3. Проблемăллă ыйтăва татса пани. | Ачасенчен нихăшĕ те çак таранччен тавçăрса илсе кăшкăрса ямарĕ тĕк вĕрентекен тепĕр хут *Ула така йывăç çине мĕнле улăхса ларнă-ши?* ыйту | Петĕр çырнă *„Ула така йывăç çинче ларать”* предложенире йăнăш тупаççĕ, *ула така* вырăнне *ула такка* тесе çырмалла пулнине палăртаççĕ. | тавçăру |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | патне таврăнать. | | |
| | 4. „Пулма пултарайман” предложенисем тупасси (93 стр.-ри юпари сăмахсемпе) | Вĕренӳ кĕнекинчи сăмахсемпе ĕçлеттерет.<br>Пулăшу материалĕ:<br>*Анна çинче трактор çӳрет. Эпĕ аллăра мулкач тытнине курсан ман класри ачасем тĕлĕнсе кайрĕç. Вăрă тĕтĕмре çӳрет.* | Ачасем предложенисем тума тăрăшаççĕ.<br>Вăраммăн илтĕнекен хупă сасăсене сиктерсе хăварсан сăмах пĕлтерĕшĕ улшăннине калаççĕ. | Предложени йĕркелени |
| **III. Кану саманчĕ** | Куç гимнастики ирттерни. | | | |
| **IV. Рефлекси** | 1. Хисеп ячĕсене астуса çырни. | Астуса çырмалли текстпа паллаштарать.<br>Астуса çырни<br>*Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр, вуннă.* | Ачасем сăмахсене вулалă хыç-çăн типтере çыраççĕ, доска çинчен пăхса юнашар ларакан юлташне тĕрĕслеттереççĕ, хак-лав виçине таблона лартаççĕ. | шырав |
| | 2. „Çын ячĕ-сене чăвашла пĕлетĕр-и?” вă-йă | Класри ачасен ячĕсене çырнă конвертсене валеçсе парать.<br>*Тупмалли ятсем: Микитта (Никита), Мишша, Тимухха (Тимофей), Микулкка (Николай).* | Ачасем ретпе 3 ушкăна пайланса ĕçлеççĕ. | ушкăнпа ĕçлени<br>шырав |
| | 3. Карточкăпа ĕçлени. | Ачасен скобкăна уçса кирлĕ хупă | Ĕçе ача хăй хĕрлĕ тĕслĕ | ача хаклавĕ |

<table>
<tr><td></td><td></td><td>сасса лартса çырмаллине ăнлантарать.(2 №-лĕ хушса пани.)</td><td>карточкăпа (3 №-лĕ хушса пани) тĕрĕслесе хаклать.</td><td></td></tr>
<tr><td></td><td>4. Хăнăхтарупа ĕçлени.</td><td>233-мĕш хăнăхтарăва пурнăçлама сĕнет.<br>Ĕçĕ: Текста вулăр. Вăрăм хупă сасăллă сăмахсене çырса илĕр.</td><td>Çырса илмелли сăмахсем: лăссисем, силленсе, каллех, малалла, çăмăллăн, ытлашши, киленнĕ, ула такка, сасси, шăппăн-шăппăн, патнелле, тăрри, таккать, таккать, унталла-кунталла, аялалла, çӳлелле, хушшинче. (Пурĕ 18 сăмах)<br>Ачасем ĕçе класпа тĕрĕслесе хаклаççĕ, таблона лартаççĕ.</td><td>хаклав</td></tr>
<tr><td></td><td>4. Урока тĕспе хаклани.</td><td>Вĕрентекен ачасенчен урока хаклама ыйтать.<table><tr><td colspan="3">Урок (урокра)</td></tr><tr><td>килĕшрĕ (хĕрлĕ)</td><td>интереслĕ пулчĕ (сарă)</td><td>интереслĕ пулмарĕ (кăвак)</td></tr></table></td><td>Вĕренекенсем таблицăпа усă курса урока хаклаççĕ, парта айккине çыпăçтарнă тĕрлĕ тĕслĕ хутсенчен пĕрне суйласа типтере çыпăçтараççĕ те çĕклесе класа тата вĕрентекене кăтартаççĕ.</td><td>хаклав</td></tr>
<tr><td></td><td>6. Ача хăйĕн ĕçне хаклани</td><td>Ачана урокра ĕçленĕшĕн хăйĕн ĕçне хаклама сĕнни.</td><td>Виçĕ енлĕ дневник тĕслĕхĕпе усă курса вăтам оценкăна</td><td>Виçĕ енлĕ дневник</td></tr>
</table>

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | шутлаççĕ. (4№ хушса пани) | |
| | 7. Килти ĕç пани. | Киле ĕç пани. | Ачасем киле ĕç суйласа çыраççĕ:<br>*1. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сас паллиллĕ 10 глагол çырса килмелле.Тĕслĕхрен, шакка, такка, ...*<br>*2. 234-мĕш хăнăхтару.*<br>*3. 94 стр-ри 2-мĕш правило тăрăх синквейн çырмалла.* | |
| | 8. Урока вĕçлени. | Ачасемпе сыв пуллашни. | Ачасем вĕрентекенпе сыв пуллашаççĕ. | |

Усă курнă литература


1. **Волынкин В.И.** Педагогика в схемах и таблицах: учебное пособие. –Ростов /н Дону: Феникс, 2007.
2. **Антонова З.С., Станьял В.П.** Чăваш сăмахлăхĕн вĕрентӳ меслечĕсем: Чăваш шкулен 5-11-меш класĕсенче вĕрентекенсем валли / З.С.Антонова, В.П. Станьял. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2006.
3. **Муштавинская И.В.** Технология развития критического мышления на уроке и в системе подготовки учителя: учебно-методическое пособие / И.В. Муштавинская; [2-е изд.] – СПб.: КАРО, 2015. – 144 с. – (Серия «Петербургский вектор введения ФГОС основного общего образования»).
4. **Заир-Бек С.И., Муштавинская И.В.** Развитие критического мышления на уроке. – М.: Просвещение, 2012. – 224 с. – (Работаем по стандартам второго поколения).

1 №-лĕ хушса пани. Синквейн

*хупă сасăсем*
*кĕскен, вăрăммăн*
*илтĕн(ме), пултар(аççĕ), çыр(аççĕ)*
*Хупă сасăсем кĕскен те, вăрăммăн та илтĕнме пултараççĕ. Вăрăммăн илтĕнсен икĕ хупă сас палли çыраççĕ, кĕскен илтĕнсен пĕр хупă сас палли çыраççĕ.*
алă – аллă

2 №-лĕ хушса пани. Карточка

Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăсене лартса çырăр.

Сань..а, Вань..а, Алта..и, Çта..ан, Уль..а, Пе..я, Ва..а, Таи..е, Ми..а, Па..я, И..е, Са..ати, Кри..а, Хвету..а, Наçта..и, Рай..а, Я..у, Ани..а, Уни..е, Лю..а, А..а, Ти..а.

Кирлĕ хупă сасăсем: кк, лл, мм, нн, пп, сс, çç, тт, шш.

3 №-лĕ хушса пани. Тĕрĕслемелли карточка.

Санькка, Ванькка, Алтатти, Çтаппан, Улькка, Пеття, Ваçça, Таиççе, Мишша, Палля, Илле, Саввати, Кришша, Хветуçça, Наçтаççи, Райкка, Якку, Анисса, Униççе, Люçça, Анна, Тимма.

4 №-лĕ хушса пани.

| Эпĕ паян пурĕ_4_ тăваткал илтĕм: | | |
|---|---|---|
| Хĕрли – 3 | Сарри – 1_ | Кăвакки _0_ |

| | | |
|---|---|---|
| 1) киле панӑ ӗҫре пӗтӗм сӑмаха тупрӑм | 1) астуса ҫырнӑ чухне 1 йӑнӑш пулчӗ | |
| 2) вӑрӑммӑн илтӗнекен хупӑ сасӑллӑ 10 сӑмаха тӗрӗс ҫырма вӗрентӗм | | |
| 3) 233-мӗш хӑнӑхтаруран вӑрӑммӑн илтӗнекен хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене пурне те тӗрӗс тупрӑм. | | |
| Манӑн вӑтам балл 4, 75 пулчӗ, паян дневника „5” лартрӑм | | |